**Асанне мана вăрçать.**

Урамри йăмра çине
Тин кăна хăпарнăччĕ,
Килчĕ тухрĕ асанне:
«Мĕн тăватăн, ашкăнчак?»

Пикенсех мана вăрçать
«Арçури, — тет, —апăрша,
Вĕлтĕрен илетĕп те
Вĕтелетĕп пурпĕр, — тет,
Хĕр ача пуçпа çӳле
Мĕн тума хăпармалла?
Ăнсăртран ӳксен вилен!
Ан сехре хăпартиччен.
Ăсататăп хулана,
Куç ан куртăрччĕ сана».

Эп хамах анасшăнччĕ,
Пахчана тухасшăнччĕ.
Туратран çаклантăм та
Çурăлчĕ тем çатăртах.
Кĕпине хамах çĕлерĕм,
Асанне ăна сисмерĕ.

Выртнăччĕ диван çине
Çывăрам пекки туса,
Пычĕ те пуçа шăлса
Пăшăлтатрĕ асанне:
«Ан васка-ха хулана,
Сансăр чунăм хурланать,

Вӑрҫрӑм ҫав юратнӑран,

Ӳкесрен хӑранӑран».

Манӑн та йӗрес килет,

Асаннеҫӗм, ан ҫиллен!

*Борлен,Б. Асанне мана вӑрҫать : [сӑвӑ] / Б. Борлен // Чӑваш литературин антологийӗ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пӑча валли ҫырнӑ хайлавсем. — С. 266.*